25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
20
ЭРНЕКУН
270 (6205) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Электроэнергие типтерлӗн расходламалла

Сталин юлташ лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗллевпе ӗҫлесе, пирӗн промышленность Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура хӑйӗн ӗҫне вӑйлатса пырать. Промышленность ӳссе пыракан хӑвӑртлӑхсемпе ӗҫлесси ӑна электроэнерги мӗнле парса тӑнинчен нумай килет. Пирӗн предприятисем халӗ, ҫӗршывпа фронта кирлӗ продукцие кӑларассине ӳстерсе пынӑ май, электроэнергие кунран-кун ытларах ыйтаҫҫӗ.

Электричество вӑйне ӳстерсе пымалли майсем нумай. Вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсене пӑхмасӑр, пирӗн халӑх хуҫалӑхӗнче ҫӗнӗ станцисем лартса, вӗсене ӗҫе кӗртеҫҫӗ, ку таринччен ӗҫленӗ станцисене тухӑҫлӑрах ӗҫлеттереҫҫӗ. Кусемсӗр пуҫне предприятисене электричество вӑйӗ ытларах парса тӑмалли тепӗр май пур. Сӑмах перекетлӗх ҫинчен пырать.

Типтерлӗх, перекетлӗх — вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ҫирӗп закон. Уйрӑмах ҫак закона промышленноҫра чӗртавар, топливо тата электроэнерги тӗлӗшпе куллен пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Электроэнергине перекетлесси хальхи вӑхӑтра питех те пысӑк хуҫалӑхлӑ задача пулса тӑрать. Перекетлесе хӑварнӑ электроэнергин кашни киловат-сехечӗ Хӗрлӗ Ҫара ытларах продукци пама пулӑшать.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура малта пыракан коллективсем ҫакна тивӗҫлипе ӑнланса илнӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе, пахалӑхне лайӑхлатса пынипе пӗрлех, вӗсем чӗртавара, топливӑна тата электроэнергине перекетлессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Сӑмахран, Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ, малтанах палӑртса хунӑ организациллӗ тата техникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫласа пырса, октябрь уйӑхӗнче 16.170 киловат-сехет электроэнерги перекетленӗ. Ҫак паха ӗҫе комбинатри кашни цех, кашни электрик хутшӑннӑ. Уйрӑмӑнах инженер Бабин, старши электромонтер Когин тата электромастерской заведующийӗ Попелуев юлташсем пархатарлӑ ӗҫленине палӑртмалла.

Электричество вӑйӗпе типтерлӗн усӑ курас тӗлӗшпе ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗ туса пыракан ӗҫсем те хӑйсен хӑшпӗр результачӗсене параҫҫӗ. Хулари пысӑкрах предприятисем, йышлӑ оборудованисемпе ӗҫлеҫҫӗ пулин те, электроэнергине яланхинчен сахалтарах расходлаҫҫӗ.

Анчах кусем электроэнергине перекетлес тӗлӗшпе тума тытӑннӑ ӗҫсен пуҫламӑшӗсем кӑна-ха. Малта татах та пысӑкрах, татах та ответлӑрах задачӑсем тӑраҫҫӗ. Электростанцине хӗле кӗме тӗплӗн хатӗрлесе ҫитерессн, станцисенче топливӑна май пур таран перекетлесси, вырӑнти топливӑпа усӑ курасси, техникӑна пӗлекен кадрсем хатӗрлесси, электроэнергин кашни киловат-сехетне усӑллӑ ҫӗре ярасси, — ҫаксем пулаҫҫӗ ӗнтӗ пирӗн энергетиксем умӗнче, предприятисен коллективӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем. Ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тесен, электроэнергине типтерлӗн расходлассишӗн пыракан кӗрешӗве предприятисенчи хуҫалӑхпа парти руководителӗсен ҫеҫ мар, кашни рабочипе служащин, кашни совет работникӗн хутшӑнмалла.

Электроэнергине май пур таран перекетлесси — Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту условийӗсенчен пӗри. Ҫак услови пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине фабрикӑпа заводсен пур коллективӗсем те пӗлмелле. Типтерлӗхшӗн кӗрешнин лайӑх тӗслӗхӗсене кӑтартакан инженерсемпе техниксен, рабочисемпе служащисен опытне анлӑн сарас пулать, электроэнергине усӑсӑр тӑккалакансене хыттӑн сивлес пулать.

Хӑшпӗр предприятисенче перекетлӗхшӗн кӗрешес ӗҫе ҫавӑн пек организацилемен-ха. Татӑклӑ мерӑсем йышӑнас вырӑнне сӑмах ҫаптарнипех лӑпланса ларма пӑхаҫҫӗ. Ҫавна пула ун пек ҫӗрте электроэнергине яланхи пекех типтерсӗр расходлаҫҫӗ. Шупашкарти ҫӑкӑр комбиначӗнче электроэнергине палӑртнӑ лимитран иртнӗ уйӑхра 50 процент, «Красный мебельщик» артельре — 44 процент, эрехпе ликер заводӗнче — 31 процент ытларах расходланӑ. Ҫирӗплетнӗ лимита ҫавӑн пек пӑсни Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра, поликлиникӑра, телефон станцинче тата ытти чылай предприятисемпе учрежденисенче палӑрать.

Хӑшпӗр предприятисенче электричество вӑйне мӗн чухлӗ тӑкакланине тӗрӗс шута илсе пырассине йӗркелемен. Шупашкарти механизациленӗ арманта, пир-авӑр тата чӑлха фабрикисенче электроэнергине шута илсе пыракан приборсене—счетчиксене лартман. Ҫавна пула кунта электричество вӑйне хуҫасӑрла расходлаҫҫӗ.

Электричество вӑйӗпе усӑ курмалли йӗрке — кашни предприятишӗн ҫирӗп закон. Кирек хӑҫан та тата кирек мӗнле условисенче те ҫав йӗркене пӑхӑнса ӗҫлес пулать. Техникӑллӑ эксплоатацин йӗркисене пӑсни, электроэнергине усӑсӑр пӗтерни, ӑна вӑрлани ҫӗршыв умӗнче айӑпа кӗни пулать. Ҫавӑн пек государствӑна хирӗҫле практикӑна халех пӑрахӑҫлас пулать. Электроэнергине усӑсӑр пӗтерекенсене, вӗсем кирек мӗнле предприятире ӗҫлеҫҫӗ пулин те, йӗркене кӗртмелле. Государство предприятие мӗн таран энерги парать, ҫавна пӗтӗмпех кирлӗ ҫӗрте усӑ курмалла, электроэнергин кашни киловат-сехечӗпе фронта ытларах продукци парассишӗн кӗрешмелле.

Предприятисенчи хуҫалӑх руководителӗсен, парти, профсоюз тата комсомол организацисен электроэнергие вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек перекетлес ыйтупа ытларах интересленмелле. Вӗсен ҫак ыйтӑва вӑхӑтран вӑхӑта ҫеҫ хускатмалла мар, кашни кун пурнӑҫа кӗртсе пымалла, электроэнергипе кашни цех, смена тата станок мӗнле усӑ курнине тӗрӗслесе тӑмалла. Комсомол электричествӑн шефӗ пулмалла, электросеть юсавлине, энергипе мӗнле усӑ курнине унӑн пӗрмаях тӗрӗслесе тӑмалла, пур пек ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме тӑрӑшмалла, типтерлӗхпе перекетлӗхшӗн кӗрешнин примерне кӑтартмалла.

Электроэнергине перекетлессишӗн кӗрешесси — мӗнпур коллективӑн ӗҫӗ. Агитаторсемпе вулавҫӑсен ҫак кирлӗ ӗҫ тавра массӑллӑ агитацие сарса ярас пулать. «Фронта лайӑхрах пулӑшас тетӗн пулсан — электроэнергие перекетле» темӑпа рабочисемпе служащисем хушшинче калаҫусем ирттерес пулать, кашни киловат-сехет электроэнерги мӗн таран хаклӑ тӑнине ӑнлантарса парас пулать. Пӗр-пӗр станок 2—3 сехет хушши пушӑ ҫаврӑнсан 7,5 киловат-сехет электроэнерги усӑсӑр тӑкакланнине, перекетлесе хӑварнӑ электроэнергин 1 киловат-сехечӗ 100 килограмм чугун шӑратма е 88 килограмм ҫӑкӑр пӗҫерме пултарнине тата ытти ҫавӑн пек япаласене кашни рабочипе работница пӗлсе тӑтӑр.

Фабрикӑсемпе заводсен электричество вӑйӗ енӗпе ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес пулсан, электростанци коллективӗсен хӑйсен те лайӑхрах ӗҫлес пулать. Вӗсен аварисене пӗтерес, техникӑпа тӗрӗс усӑ курас тата энергие ытларах парас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлемелле. Хӗллехи сезона кӗнӗ май, хуран таврашӗсене, тӗрлӗрен оборудованисене мӗнле юсанине кашни станцирех тепӗр хут тӗрӗслесе тухас пулать, топливо склачӗсенче, бункерсенче кӑтартуллӑ йӗркелӗх тӑвас пулать. Ҫав вӑхӑтрах тата ӗҫре кирлӗ кадрсене пӗрмаях хатӗрлеме кирли ҫинчен, вӗсен квалификацине ӳстерсе пыма кирли ҫинчен манма юрамасть.

Пирӗн предприятисем ӳссе пынӑ май, вӗсен хӑйсен станцийӗсене анлӑлатас тата вӗсем ҫук ҫӗрте генераторлӑ установкӑсем лартас ыйту тухса тӑрать. Ҫак ыйтусене татса панӑ чух хуҫалӑх работникӗсемпе энергетиксен хӑюллӑрах тата пуҫаруллӑрах пулмалла. Пур пек энергоустановкӑсемпе туллин усӑ курасси те вӗсен кулленхи тивӗҫӗ.

Станцисенче электроэнергине ытларах туса кӑларас, предприятисенче ӑна май пур таран перекетлесе хӑварас тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла. Энергетиксен, инженерсемпе техниксен, рабочисемпе служащисен, машинистсемпе кочегарсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗ электроэнергин кашни киловат-сехечӗпе туллин усӑ курма, фронтпа ҫӗршыва ытларах продукци пама пулӑштӑр.

Совет студенчӗсен фашизма хирӗҫле митингӗ

Ноябрӗн 15-мӗшӗнче Мускавра совет студенчӗсен фашизма хирӗҫле митингӗ пулса иртнӗ.

Митинга Мускаври государственнӑй университетӑн студенчӗ, халӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн капитанӗ пулса тӑраканскер, Орест Шевцов уҫнӑ. Вӑл совет студенчӗсене, Англипе Америка студенчӗсене тата Европӑри оккупациленӗ ҫӗршывсен студенчӗсене—хӑйсен мӗнпур вӑйне, мӗнпур шухӑшне культурӑн, ирӗклӗхӗн, цивилизацин чи усал тӑшманӗ пулса тӑракан гитлерла Германие аркатса тӑкас ӗҫе пама чӗннӗ. Сталинграда хӳтӗлекенсен ячӗпе митингри ҫынсене Харьковри педагогика институчӗн студенчӗ —гвардин старши лейтенанчӗ Луценко боевой салам каланӑ.

Митингра ҫаксем сӑмах тухса каланӑ: Ташкентри Вӑтам Ази Университечӗн студентки Рахимбабаева, Прагӑпа Мускав университечӗсен профессорӗ Зденек Неедлы, Аслӑ шкул ӗҫӗсен комитечӗн председателӗ Кафтанов, Мускаври авиаци институчӗн студенчӗ Максимов, Хусанти юридически институтӑн студенчӗ Чекановский, Ленинград институчӗн студенчӗ Сорокин, Украинӑри партизан Александр юлташ тата ыттисем те.

Митинг хытӑ саваӑнса алӑ ҫупса Сталин юлташа салам янӑ.

Митинг пӗтӗм тӗнчери студентсене чӗнсе каланӑ тата Лондонри студентсен массӑллӑ митингне салам янӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ноябрӗн 18-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 18-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе пехотин атакисене сирсе тӑнӑ. Нимӗҫсем пехотӑн пӗр полк таран вӑйӗпе тата танксем пулӑшса пынипе хула оборонин ҫурҫӗр пайӗ ҫине тепӗр хут наступлени тунӑ. Горохов юлташ ертсе пыракан боецсем гитлеровецсен атакисене сирсе янӑ. Заводсен районӗнче Н-ски соединени активлӑн ҫапӑҫса противникӑн тӗреклетнӗ темиҫе пунктне тытса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсенне 600 салтакпа офицер таран вӗлернӗ е амантнӑ. Нимӗҫсен 8 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, 9 орудине, 12 минометне, 24 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, 11 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ. Хулана хӳтӗлекенсем тӑшмана кашни кунах питӗ пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ. Иван Егоров красноармеецӑн миномет расчечӗ кунҫа тӑшманӑн 30 салтакне вӗлернӗ. Ходаковский лейтенантпа темиҫе боец противникӑн пӗр ротин атакине сирсе янӑ тата 70 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене тӗреклетнӗ тата противник ҫине персе тӑнӑ. Пӗр участокра пирӗн наблюдательсем тӑшманӑн пехотин 500 ҫынна ҫити шутланакан колонни куҫса пынине асӑрханӑ. Баринов юлташ командир пулса тӑракан чаҫӑн артиллерисчӗсем ҫав колонна ҫине персе ӑна сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре совет войскисем активлӑн кӗрешнӗ. Пирӗн часть нимӗҫсем йышӑнса илнӗ халӑх пурӑнакан пункта тапӑннӑ. Тӑшманӑн 200 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ тата 3 танкпа 4 автомашинӑна ҫунтарса янӑ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗҫ офицерӗсем ларса пыракан 2 ҫӑмӑл автомашинӑна тытса илнӗ.

* * *

Моздок районӗнче противникӑн икӗ батальонӗ, 50 танкпа тата 20 бронемашинӑпа пӗрле ҫапӑҫса, пирӗн оборонӑна татма хӑтланнӑ. Пирӗн чаҫсем организованно персе тӑрса нимӗҫсен пехотине танксенчен татса илнӗ те гитлеровецсене каялла хӑваласа янӑ. Ҫав участокра нимӗҫсен 17 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, пирӗн боецсем ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче ҫав танксенчен ултӑшӗпе дот вырӑнне усӑ курнӑ. Каҫпала, противник тепӗр хут атакӑланӑ. Пирӗн чаҫсем хӑйсен малтанхи позицийӗсем ҫинчех ҫапӑҫаҫҫӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн Цеплиев юлташ ертсе пыракан боецсем нимӗҫсене тӗреклетнӗ позицисенчен хӗссе кӑларнӑ. Красноармеец узбек Ахмед Ташматов питӗ чаплӑ ӗҫ тунӑ. Пулеметпа персе тӑрса, вӑл контратакӑсем тунӑ гитлеровецсене виҫӗ хутчен тыта-тыта чарнӑ. Нимӗҫсен пӗр ушкӑнӗ ҫав боеца ҫавӑрса илнӗ те ӑна тыткӑна илме хӑтланнӑ. Ташматов хӑйне ҫавӑрса илнӗ гитлеровецсене гранатӑпа пӗтерсе тӑкса, ҫаплах пулеметпа персе тӑнӑ. Ҫав ҫапӑҫура вӑл вуншар гитлеровеца вӗлерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн артиллерипе пехота нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 400 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 10 дзота, 24 блиндажа тата противникӑн наблюдательнӑй пунктне ишӗлтернӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗнчи партизансен отрячӗ халӑх пурӑнакан пӗр пунктри нимӗҫ гарнизонне аркатса тӑкнӑ. Хаяр ҫапӑҫура тӑшманӑн 50 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Ҫав отрядри партизансен пӗр ушкӑнӗ противникӑн поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Паровозпа темиҫе вагон ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсен пирӗн войскӑсем тытса илнӗ позицийӗсем патӗнче пирӗн боецсем Тарабаров лейтенантӑн касса-ҫурса пӗтернӗ виллине тупнӑ. Унччен пӗр кун малтан ҫав лейтенанта йывӑр амантса тыткӑна илнӗ пулнӑ. Гитлерла бандитсем тыткӑна лекнӗ командира нумайччен тискеррӗн асаплантарнӑ. Вӗсем унӑн аллинчи мӗнпур пӳрнисене касса татнӑ, питне темиҫе ҫӗрте пӗҫертнӗ, 23 ҫӗрте пульӑсемпе тата ҫӗҫӗпе суранланӑ, унтан вара пуҫне ҫапса ватнӑ.

* * *

Корсикӑри халӑх Итали оккупанчӗсене тӑшманла кӗтсе илнӗ. Кальипе Бонифачиора пурӑнакан ҫынсен пӗр ушкӑнӗ унта Итали войскисем пырса кӗрсен тепӗр куннех Итали салтакӗсемпе офицерӗсене тапӑннӑ. Аяччӑра кӑнтӑрла итальянецсен пӗр офицерне вӗлернӗ. Бонифачиора француз патриочӗсем горючи складне ҫунтарса янӑ.

Ноябрӗн 19-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 19-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сирсе тӑнӑ. Хулан заводсем вырнаҫнӑ пайӗнче Н-ски гвардейски минометнӑй часть нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Литвинов юлташ ертсе пыракан пулеметчиксем икӗ талӑк хушшинче противникӑн атакисене ӑнӑҫлӑн сирсе тӑнӑ, вӗсем гитлеровецсене пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Хулан кӑнтӑр енчи пайӗнче пирӗн подразделенисем активлӑн кӗрешсе тӑшманӑн темиҫе укреплениине тытса илнӗ.

Пирӗн боецсем пехота хӗҫпӑшалӗпе персе нимӗҫсен 2 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски подразделени ҫапӑҫса пырса разведка тунӑ. Минӑсем хурса тухнӑ тата пралук карнӑ вырӑнсем урлӑ каҫса, пирӗн боецсем противникӑн окопӗсемпе блиндажӗсене кӗрсе кайнӑ та 60 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илсе тата трофейӑсем тытса илсе, пирӗн подразделени хӑйӗн чаҫӗ тӑракан вырӑна таврӑннӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн пӗр подразделенири артиллеристсем, атака тӑвакан пехотнӑй чаҫсене пулӑшса пырса, тӑшманӑн 300 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлернӗ тата противникӑн 6 танкне персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем, активлӑн кӗрешсе, пӑртак малалла куҫнӑ. Противник, контратакӑсем туса, пирӗн подразделенисене малалла куҫма чарма хӑтланнӑ. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Нимӗҫсен 13-мӗш горнострелковӑй полкӗн 2-мӗш батальонӗнчен тыткӑна илнӗ салтаксемпе офицерсем каланӑ тӑрӑх, ҫав батальонӑн пӗр ротинче 21 салтак, тепринче 6 салтак ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Юлашки икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче кӑна вӑл батальонра 300 салтакпа офицера яхӑн вилнӗ.

Туапсе патне пымалли вырӑнсем тӗлӗнче пирӗн зенитнӑй артиллери нимӗҫсен 7 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Карели фронтӗнче Н-ски соединенири снайперсем юлашки 6 кун хушшинче тӑшманӑн 180 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Снайперсем Коровин тата Генералов юлташсем ҫав вӑхӑт хушшинче 500 нимӗҫе вӗлернӗ, снайпер Еременюк юлташ 6 гитлеровеца вӗлернӗ. Старши лейтенантсен Валеевпа Ратушнӑйӗн подразделенийӗсенчен тӑракан разведка отрячӗ противникӑн опорнӑй пунктне ӑнӑҫлӑн тапӑннӑ. Ҫавӑн чухне 100 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ е амантнӑ, 9 дзотпа землянкӑна ишӗлтернӗ, 5 пулемета тата 5 миномета пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн разведчиксем хӑйсен чаҫне ӑнӑҫлӑнах таврӑннӑ.

* * *

Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ гитлеровецсен карательнӑй экспедицийӗпе ҫапӑҫса 100 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ чухне партизансем боеприпассен складне тата противникӑн 4 автомашинине ҫунтарса янӑ.

* * *

Гитлеровецсем Ленинград облаҫӗнчи Доброслински ялсоветне кӗрекен ялсенчи хресченсене ҫаратса тухса выҫӑ вилӗмпе вилмелле туса хӑварнӑ. Ҫав ялсоветне кӗрекен 12 ялта мӗнпурӗ те 2 ӗне ҫеҫ тӑрса юлнӑ, вӗсем — нимӗҫсем лартнӑ ҫынсен, бургомистрпа унӑн помощникӗн ӗнисем. Нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем хушнӑ тӑрӑх, хресченсенчен кӑҫалхи тырра пӗтӗмпех туртса илнӗ. Хресченсене, персе вӗлерессипе хӑратса, пахчари ҫӗрулмипе усӑ курма чарнӑ. Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем 19 хресчене, хӑйсен пахчисенче хӑйсем валли пӑртак ҫӗрулми кӑларнӑ чухне тытнӑскерсене, персе вӗлернӗ. Большое Опуево ялӗнчен 60 хӗрарӑма нимӗҫсем Германие каторгӑна илсе кайнӑ.

* * *

Югослави партизанӗсем Петинграда тата Врногрочa тытса илнӗ. Грахово — Книн районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче партизансем нимӗҫсемпе итальянец оккупанчӗсене нумай вӗлерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ.

Вӑрман промышленность работникӗсене Совет Союзӗн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградӑланӑ

Вӑрман материалӗсене хатӗрлес тата турттарас тӗлӗшпе Правительство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑшӑн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, пирӗн республикӑри вӑрман промышленноҫӗн ҫак работникӗсене орденсемпе тата медальсемпе наградӑланӑ:

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе:

Кузьма Федотович Федорова — Канаш леспромхозӗн директорне

«Знак Почета» орденӗпе:

Михаил Игнатьевич Дмитриева — Улатӑр районӗнчи вӑрман турттараканa;

Иван Васильевич Дубова — Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарне;

Михаил Аркадьевич Кесельмана — СССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн отдел начальникне, чугунҫул валли вутӑ хатӗрлес тӗлӗшпе Чӑваш Республикинче Оборонӑн Государственный Комитечӗн Уполномоченнӑйӗ пулса ӗҫлекенскерне.

«За трудовую доблесть» медальпе:

Афанасий Алексеевич Алексеева — Йӗпреҫ районӗнчи вӑрман касакан колхозникe;

Андрей Иванович Баринова — Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн отдел начальникне;

Семен Григорьевич Григорьева — Советски районри вӑрман касакан колхозникe;

Семен Романович Романова — Ҫӗмӗрле районӗнчи вӑрман касакан колхозникe;

Гибатзин Насретдинович Салихова — Чкаловски районри вӑрман касакан колхозникe;

Иван Степанович Степанова — ВКП(б) Елчӗк райкомӗн секретарьне;

Иван Петрович Суслова — Пӑрачкав районӗнчи вӑрман турттаракан колхозникe.

«За трудовое отличие» медальпе:

Иван Васильевич Ермолаева — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи вӑрман касакан колхозникe;

Вениамин Иванович Николаева—Хӗрлӗ Чутай районӗнчи вӑрман касакан колхозникe;

Ксения Николаевна Пчеловӑна — Елчӗк районӗнчи вӑрман касакан колхозницӑна;

Петр Сергеевич Сергеева — Канаш районӗнчи вӑрман турттаракан колхозникe;

Петр Семенович Чудакова — Вӑрнар районӗнчи вӑрман касакан колхозникe.

Наградӑланисене саламласа тата малашне пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума чӗнсе СССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарӗ Салтыков юлташ телеграмма янӑ.

Авӑн ҫапса пӗтермелли ҫирӗмкунлӑх

Колхозсенче социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне тата ноябрӗн 7-мӗшӗнче панӑ приказне ӑнлантарса пама ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ районри актива колхозсене ячӗ. Ҫак иртнӗ кунсенче колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртрӗҫ. Вӗсенче колхозниксем Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне итлерӗҫ, малашнехи ӗҫсене палӑртрӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн районри пур колхозсенче те производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗкленӳ пуҫланчӗ. Сталин юлташӑн доклачӗ ҫине ответлесе, колхозниксем тата тухӑҫлӑрах ӗҫлемешкӗн ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

— Сталин юлташӑн докладне итленӗ хыҫҫӑн пирӗн колхозниксем авӑна срокчен ҫапса пӗтерме пулчӗҫ, — тет «Социализм» колхозӑн председателӗ Тихонов юлташ. — Вӑл обязательствӑна хӑвӑрт пурнӑҫлассишӗн бригадӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту пуҫланса кайрӗ.

Именкассинчи «Молния» колхозӑн членӗсем пӗтӗм тырпула ноябрӗн 25-мӗшӗччен ҫапса пӗтерме, ноябрӗн 20-мӗшӗнче государствӑна тырӑ парса татма обязательство илчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн колхозниксем ӗҫе ҫӗнӗ хавхаланупа тытӑнчӗҫ. Паянхи куна Афанасьева юлташ ертсе пыракан бригада авӑн ҫапса пӗтерчӗ, государствӑна пама кулленех тырӑ турттараҫҫӗ.

Районри колхозниксем, Сталин юлташ ҫӗнтерӳ тумашкӑн ҫӗнӗ хавхаланупа ӗҫлеме чӗнни ҫине ответлесе, фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн задачисене срокчен пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ.

А. РУДЕНКО,
ВКП(б) райкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ.

Кая юлнисем

ЭЛӖК, ноябрӗн 19-мӗшӗ. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). Тимӗрҫкассинчи «Прожектор» колхозӑн ҫирӗмкунлӑхра государствӑна 307 центнер тырӑ памалла пулнӑ. График тӑрӑх колхозӑн кашни пилӗккунлӑхра 23-шер центнер ӑсатса тӑмалла. Анчах та колхоз малтанхи пилӗккунлӑхра хатӗрлев пунктне пӗтӗмпе те 28 центнер кӑна ӑсатнӑ. Ноябрӗн 15-мӗшпе 18-мӗш хушшинче вара пӗр центнер та леҫсе паман.

Ҫавӑн пекех колхоз авӑн ҫапмалли графика та тултарса пымасть. Колхозӑн татах та 50 гектар тыррине ҫапмалла.

Хурасанри Киров ячӗпе тӑракан колхоз 0,25 гектар ҫинчен кӗрхи тулӑпа ыраш кӗлтине халӗ те кӗртсе пӗтермен. Колхозӑн кашни пилӗккунлӑхра 26 гектар ҫинчи тырпула ҫапса пуҫтармалла, анчах колхозра 7 кун хушшинче те 20 ҫын тӑпачӑпа 12 гектар тыррине кӑна ҫапнӑ. Ноябрӗн 17-мӗшӗнче колхоз пӑрҫа ҫапнӑ. Ҫапнӑ пӑрҫана сӑврӑнӑ та итем ҫине витмесӗрех пӑрахса хӑварнӑ. Ҫитменнине тата хурал та тӑратман. Пӑрҫана кунта питӗ тӑккалаҫҫӗ. Колхоз председателӗ К. Гордеев юлташ ҫав тӑккаланчӑксем пирки питех те ҫӑмӑллӑн калаҫать.

— Пӗтӗм пӑрҫана ҫапса пӗтеретпӗр те, тӑккаланнине сыснасене пуҫтарса паратпӑр, — тет вӑл.

Колхозра ӗҫ дисциплини япӑхса кайнӑ. Нумай колхозниксем, вӑл шутра Н. Палладиева, Е. Ефимова, Е. Савельева, А. Кузьмина тата ыттисем те кулленех ӗҫе тухмасӑр тӑраҫҫӗ. Колхоз председателӗ вӗсем пирки мера йышӑнас вырӑнне, вӗсене хӳтӗлет кӑна.

Государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе те колхоз начар ӗҫлет. Колхозӑн халӗ государствӑна татах та 113 центнер тырӑ памалла, апла пулин те колхоз пӗрремӗш пилӗккунлӑхӑн графикне тултарман. Ҫав вӑхӑт хушшинче вӑл пӗтӗмпе те 32 центнер кӑна тырӑ леҫнӗ. Ноябрӗн 17-мӗшпе 18-мӗш хушшинче тырӑ пӗр лав та ӑсатман.

Районри чылай колхозсем ҫакӑн пек кая юлса пыни партипе совет тата комсомол организацийӗсем ҫак ӗҫе тивӗҫлипе организацилеменнинчен килет.

С. ШАДИН.

Малта пыракан колхозсем пек ӗҫлемеҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ, ноябрӗн 19-мӗшӗ. (**Хамӑр корр., телефонпа**). «Красный Атмал», «Авангард», «Волга», «1-ое Мая» тата ытти колхозсем (пурӗ 15 колхоз) фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн 5 кунӗ хушшинче авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхозӑн молотилки ҫӗмӗрӗлсе кайнӑ. Ҫакна пӑхса тӑмасӑр, колхозниксемпе колхозницӑсем авӑна тӑпачпа ҫапма тытӑннӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ӗҫ графикӗ кунта кашниншӗн—закон. Ӑна вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртессишӗн пурте тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсен хастарлӑ ӗҫӗ районри кашни колхозшӑн пример пулса тӑрать. Фронтри пек ӗҫлени—вӑл ҫавӑн пек йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе ӗҫлени пулать те. Анчах та районри хӑшпӗр колхозсем фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑха халӗ те кирлӗ пек хутшӑнман-ха. «Красноармеец», «Самолет», Егоркинӑри «Большевик» колхозсем графика тултарса ӗҫлемеҫҫӗ, молотилкӑсем кунта 5—6 сехет ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ е пӗртте ӗҫлемеҫҫӗ, тӑпачӑпа пачах та ҫапмаҫҫӗ. «Красноармеец» колхоз—районри пысӑк колхозсенчен пӗри. Руководительсем унта ӗҫре ҫивӗч пулмалла, ӗҫе организацилеме пӗлмелле. Анчах колхоз председателӗн ҫак пахалӑхсем курӑнмаҫҫӗ. Авӑн ҫапас ӗҫ сӳрӗкленсе пырать, каҫсемпе усӑ курмаҫҫӗ. Ҫакӑн пек колхозсене районри организацисем енчен пулӑшу ытларах кирлӗ. Колхоз председателӗсенчен ӗҫшӗн ответлӑх ыйтмалла.

Х. ЛИСИН.

Райҫутӗҫ пайӗ пӗлет-и?

КАЛИНИНО. Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче кашни шкул директорӗпе заведующийӗ умӗнче питех те ответлӑ задача тӑрать: шкул тулашӗнче пӗр ачана та хӑвармалла мар, ачасене вӗренме ҫителӗклӗ условисем туса памалла.

Анчах Тури Карачурари пуҫламӑш, Асакассинчи туллимар вӑтам шкулсенче ҫак ӗҫ япӑх тӑрать, унта паянхи куна ҫитсе те ҫителӗклӗ таран вутӑ хатӗрлемен. Ку шкулсенче сивӗ пирки, вӗренекенсем шкула йӗркеллӗ ҫӳремеҫҫӗ. Ҫапла пӗтӗм районӗпе 1-мӗш класене 738 ача вырӑнне 648 ача ҫӳреҫҫӗ.

Б. ШОРНИКОВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕ

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн земляк, государство хăрушсăрлăхĕн лейтенанчĕ гвардеец М. М. Попов. Нимĕç окупанчĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн правительство ăна «Хĕрлĕ Ялав» орденĕ парса наградăланă.

ФИНСЕН ТЫТКĂНĔНЧЕ ÇУЛТАЛĂК ПУРĂННĂ

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Партизансем Н-ски чаçа хăйсем финсен тыткăнĕнчен ирĕке кăларнă красноармееца Сафонова илсе пынă, Сафонова финсем 1941 çулхи сентябрьте тыткăна илнĕ пулнă.

Финсем тыткăнри çынсем валли тунă лагерьсенче мĕнле тискер йĕркесем тунине çинчен Сафонов çапла каласа панă:

«Тыткăнри çынсене пĕчĕк айăпшăнах, тата пĕр айăпсăрах та, патакпа, прикладпа хĕнессĕ, апатсăр хăварассĕ. [illegible] ăнланаймасан—хĕнессĕ. [illegible] вĕлереççĕ. [illegible]

[illegible] эпир кунне икĕ хут вика шӳрпи çеç çинĕ. Пирĕн 180 çын шутланакан ушкăнран 30-шĕ вырăпа вилнĕ».

П. БАРАННИКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем фронтовой çирĕмкунлăхра

СĔНТЕР, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай пуçламĕш парторганизацисемпе комсомол организацийĕсем авăн çапас тата государство умĕнчи парăмсене татас ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе иртекен фронтовой çирĕмкунлăха лайăх ертсе пыраççĕ. Ильинкăри территориальнăй парторганизаци ертсе пыракан «Краснофлотец», «Хлебороб» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем ноябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕç тата государство умĕнчи парăмсене татрĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та тепĕр виç-тăватă кун хушшинче авăн çапса пĕтерет. «Хлебороб» колхоз председателĕн ĕçĕсене комсомолка Иванова туса пырать. Вăл хăй—бригадир, колхоз председателĕ чирленĕ пирки халĕ унăн вырăнне ĕçлет. Çак икĕ эрне хушшинче колхоз авăн çапас ĕçсене чылай хăвăртлатрĕ.

Çавăн пекех «Новая юнга» колхоз та çирĕмкунлăхăн малтанхи пилĕккунлăхĕнче ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлерĕ, халĕ тырпула ĕçкунĕсем тăрăх валеçме хатĕрленет. Колхозри 4 коммунист пурте производствăра ĕçлеççĕ. Виноградовăпа Ванюшкина коммунисткăсем ертсе пыракан бригадăсем ĕçре уйрăмăнах лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Фронтовой çирĕмкунлăха хутшăннă хыççăн «Новый путь» колхоз та (председателĕ коммунист Гаврилов юлташ) авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене вăйлатрĕ. Колхоз çирĕмкунлăха хутшăннă хыççăн авăн çапас тĕлĕшпе панă кулленхи графика ирттерсе тултарса пырать. Çапла, çирĕмкунлăхăн пĕрремĕш пилĕккунлăхĕнче график тăрăх колхозăн 70 гектар тыррине çапмалла пулсан, вăл 82 гектар тыррине çапрĕ. Колхозра пĕр трактор молотилки тата лашапа ĕçлекен молотилка пур. Анчах трактор молотилкин тухăçлăхĕ пĕчĕк. Вăл кунне 10 гектар тыррине çапас вырăнне 3—4 гектар çеç çапать. Çав вăхăтрах тепĕр молотилки лайăх ĕçлет: кунне 4 гектар çапас вырăнне 5—6 гектар таран çапать. Трактор молотилки начар ĕçлеши МТС хăйĕн кадрĕсене çителĕксĕр пулăшса пынинчен килет

Авăн çапас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Янăм ялсоветĕнчи «Новая жизнь», «Быстрый», Киров ячĕпе тăракан колхозсем авăна графикпа кăтартнă чухлĕ çапаймаççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозăн кулленех 10 гектар тыррине çапмалла, анчах вăл пилĕк кун хушшинче те 20 гектар тыррине çеç çапнă. Авăн çапас ĕçе лайăххах йĕркелессишĕн колхозри комсомол организацийĕ тăрăшмасть. ВЛКСМ райкомĕ те авăн çапас ĕçе хăвăртлатас пирки комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене тивĕçлипе мобилизацилеймерĕ-ха.

Çирĕмкунлăхра кашни колхозах авăн çапса пĕтерме тата государство умĕнчи парăмсене татма пултартăр тесе, эпир юлса пыракан колхозсене пулăшу парассине организацилерĕмĕр. Киров ячĕпе тăракан тата «Новый путь» колхозсене пĕрер трактор молотилки патăмăр, «1905 год» колхоза «Новый путь» тата «Первое Мая» колхозсенчен авăн çапма 10-шар çын ятăмăр.

Г. ГУСЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Агитаторсен семинарĕсене ирттереççĕ

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕ предприятисенчи тата колхозсенчи агитаторсене пулăшас тĕлĕшпе хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ. Халĕ вăл вĕсемпе тăтăшах семинарсемпе консультацисем ирттерет. Юлашки икĕ эрне хушшинче кăна хулари агитаторсемпе 4 тема тăрăх, ялсенчи агитаторсемпе 2 тема тăрăх семинарсем ирттернĕ.

Семинарсем ирттерес ĕçе партипе советăн районри активне тата предприятисенчи специалистсене явăçтарнă. Сăмахран, хулари агитаторсен семинарĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ социализмлă ăмăртăвăн вăй-хăвачĕ çинчен, парткабинет заведующийĕ Мосолов юлташ «Отечественнăй аслă вăрçăн халăхи тапхăрĕпе умра тăракан задачăсем» темăпа доклад турĕç.

Танксен колоннисене тума

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕçе çĕнĕрен вăйлăн пуçласа ячĕç. Колхозниксем танксен колоннине тума темиçе çĕршер тенкĕ укçа параççĕ. Паянхи куна танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районри колхозниксем пурĕ 125.250 тенкĕ пухса панă. Тишçырма ялсоветĕнчи «Пахарь» колхозăн членĕсем танксен колоннине тума 9.450 тенкĕ, «Красное Сормово» колхоз членĕсем 12 пин тенкĕ, «Волга» колхоз членĕсем 10 пин тенкĕ пухса панă. Янчеллă ялсоветĕнчи «Новая сила», Красноармейскри Сталин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те 7—8-шер пин тенкĕ пухнă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Малта пыракан фабрикăпа артельсем

Вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче пĕрмаях Альгешевăри (Шупашкар районĕ) «Басон» фабрика малта пырать. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне вăл виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ алăран вĕçертмест. Социализмлă ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн фабрика коллективĕ сентябрьте 10 пин тенкĕлĕх, октябрьте 15 пин тенкĕлĕх преми илчĕ. Правительствăн чысне тивĕçлĕ пулни фабрика коллективне татах та тимлĕнрех ĕçлеме хавхалантарнă. Коллектив 1942 çулти ĕçсен планне ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленĕ, октябрьти производствăллă задание 146 процент тултарнă, пур тĕрлĕ таварсене те планпа пăхнинчен ытларах туса кăларнă.

Çак çитĕнӳсене фабрика социализмлă ăмăртура тунă. Социализмлă ăмăртупа стахановла движение кунта ĕç тухăçлăхне ӳстермелли тĕп май вырăнне хураççĕ.

Вырăнти промышленоçăн промысла комбиначĕсенчен Улатăр хулинчи комбинат лайăх ĕçлет. 1942 çулта продукци туса кăлармалли плана вăл ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 101 процент, октябрьти задание 170 процент, вăл шутран кулленхи кирлĕ таварсем енĕпе 173 процент тултарнă. Çавăншăн ăна Чăваш АССР Совнаркомĕ 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Чăваш АССР промысла кооперацийĕн артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче октябрьти итогсем тăрăх Караньялĕнчи «Труд», Канашри «Авангард», Шупашкарти «Красный мебельщик» тата Карачри Клара Цеткин ячĕпе тăракан артельсем мала тухнă.

Караньялĕнчи «Труд» артель Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ хăйĕн аллинче тытать. Артель çак çулти ĕçсен планне икĕ уйăх каялла тултарнă, октябрьти задание мĕнпур продукци енĕпе 280 процент, кулленхи кирлĕ таварсем енĕпе 205 процент пурнăçланă. Унпа пĕрлех чĕртавара перекетлес, продукци пахалăхне лайăхлатас тата рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă.

Канашри «Авангард» промартель сентябрь уйăхĕнчи итогсем тăрăх пĕрремĕш преми илнĕччĕ. Артель октябрьте те начар мар ĕçленĕ. Уйăхри ĕçсен заданине мĕнпур продукци енĕпе 170 процент, кулленхи кирлĕ таварсем енĕпе 179 процент тултарнă.

Иртнĕ уйăхри производство планне çавăн пекех Шупашкарти «Красный мебельщик» артел 151,7 процент, Карачри Клара Цеткин ячĕпе тăракан артель 183,6 процент тултарнă. Ку артельсем оборонăллă продукци тата кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе те лайăх ĕçленĕ.

Республикăри ытти артельсен задачи малта пыракан артельсем пек ĕçлесси, çĕршывпа фронта кирлĕ таварсене уйăхран уйăха ытларах туса кăларасси пулать.

Ют çĕршывсенче

„Таймс" хаçат Сталин юлташăн Ассошиэйтед пресс корреспондентне панă отвечĕсем çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине Сталин юлташ панă ответсем çинче чарăнса тăрса, çапла çырать: «Вăтаçĕр тинĕсре пыракан çĕнĕ çапăçу юлашки çĕнтерӳсĕн мĕн тери паха пулса тăнине Сталин хăйĕн ялан палăртса тăнă стратегиллĕ сисĕмĕпе тата пысăк реализмпа темиçе сăмахпах ăнлантарса панă. Унăн заявленийĕ пурне те ĕнентермелле тата тӳррĕн каланăскер. Черчилль парламентра хăйĕн юлашки хут тухса каланă сăмахĕнче вырăссем чăтма çук пысăк йывăрлăха тӳссе ирттернĕ вăхăтра иккĕмĕш фронт çукки мĕн тери хытă пăшăрхантарни çинчен каласа парса, вăл Англи халăхĕн чăн-чăн кăмăлне палăртнă. Сталин халăхи вăхăтра Çурçĕр Африкăра мĕн тери пысăк ĕçсем пулса иртни çинчен вырăс халăхне паллă ăнлантарса панă»

Сталин юлташ Америка корреспондентне панă ответсем çинчен Турци хаçачĕ мĕн çырать

СТАМБУЛ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Дени сабах» хаçат хăйĕн умстатьинче, Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине Сталин юлташ панă ответсем çинче чарăнса тăрса, çапла çырать: «Африкăра вăрçă кампанийĕ пынă май тата вăл çитĕнӳсем тунă май Совет Союзĕн государство лидерĕ Америка журналистне питех те тимлĕн пăхса тухма тивĕçлĕ заявлени тунă. Çурçĕр Африкăра хăвăрт саралса пыракан операцисем иккĕмĕш фронт пулса тăмаççĕ пулин те, вĕсем çавăн пек фронт уçмашкăн шанчăклă никĕс пулса тăраççĕ. Европăра уçалакан иккĕмĕш фронт (вăл уçалатех ĕнтĕ) çав никĕспе усă курĕ, Италия уншăн пĕрремĕш объект пулса тăрать пулмалла. Иккĕмĕш фронт Вăтаçĕр тинĕс урлă унăн чи ансăр вырăнĕнче касĕ. Малашне сывлăшран Италие атакăласçĕ пулмалла. Сталин шухăшĕпе, Америкăри кампанин пĕрремĕш результачĕ — тĕнĕл держависем хушшинчи çыхăну вăйсăрланни пулса тăрĕ. Италин çапла вара Германирен уйăрăлма тивĕ. Германин ячĕпе хисепĕ пĕтĕм Европăра хавшанĕç. Оккупациленĕ мĕнпур çĕршывсемпе пусмăрти халăхсем нимĕçсене çĕнтерме çук тени тĕрĕс маррине пĕлсе çитĕç. Çакă вăл çав халăхсен моральлĕ вăйне ӳстерĕ. Россия питĕ чаплăн хирĕç тăни тата вырăссем Сталинградшăн гигантла çапăçнин чапĕ Европăри пусмăрти халăхсем хушшинче питĕ пысăк шанчăк çуратрĕç. Африкăри кампани вĕсемшĕн çĕнĕ тĕрек пулса тăрĕ. Çурçĕр Африкăра хирĕç тăма тунă йăва тавра пур французсем те пуçтарăнса пĕтĕçĕç те пĕр паллă самантра унтан нимĕç çарĕсене питĕ вăйлăн пырса çапĕç».

Юлашкинчен хаçат çакна кăтартса парать: «Паянтан вара пуçарулăх чăнкипех союзниксен аллине куçрĕ, çакна нимĕçсем хăйсем те йышăнаççĕ. Çапла ĕнтĕ, халăхи вăрçăн иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланса кайрĕ. Халиччен нимĕçсем наступлени туса пынă, демократи хăйне хӳтĕлесе тăнă. Паянтан вара ĕç йăлтах урăхла пулать. Çак факта Сталин питĕ савăнса кăтартса парать те».

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

АНГЛИЧАНСЕН ЛИВИРИ НАСТУПЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Сывăхри хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ кăларнă черетлĕ коммюникере çапла пĕлтернĕ: тăшмана анлă фронтра йĕрлесе пыракан 8-мĕш армин войскисем ĕнер Бенгазирен 70 мильăра пулнă. Ноябрĕн 16-мĕшпе 17-мĕшĕ хушшинче çĕрле Англи авиацийĕ противникăн Бенгази гаванĕнчи суднисене ăнăçлăн атакăланă. Ноябрĕн 16-мĕшĕнче противникăн 6 транспортнăй самолетне персе антарнă тата çапăçусем пыракан районра сахалтан та тепĕр 6 самолет пĕтерсе тăкнă. Англи авиацийĕн çухатусем пулман.

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ ДЕРНĂНА ТАТА ЭЛЬ-МЕКИЛĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Дернăна тата Эль-Мекилăна тытса илнĕ.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин 1-мĕш армийĕн малта пыракан чаçĕсем Тунисра Германипе Итали войскисемпе тĕл пулнă. Операцисене Америкăн моторизованнăй пехоти хутшăнать. Нью-Йоркран радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Тунисри çапăçусем халăхи вăхăтра стратеги тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ пулса тăракан авиаци базисене тата гаваньсене тытса илессишĕн пыраççĕ. Англин Мальта утравĕ çинчи аэродромсенче вырнаçса тăракан авиацийĕ çав операцисене активлăн хутшăнать. Вăтаçĕр тинĕсĕн мĕнпур хĕвеланăç пайĕнче Англи флочĕ пуç пулса тăрать.

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС) Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: Англи çарĕ çыран хĕррипе Бизерта тата Тунис еннелле наступлени туса пынă вăхăтра, Англипе Америка войскисем Тунисăн кăнтăрти пайне татса кĕме тăрăшаççĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат Тунисри кĕрешӳ питех те хаяр пуласси çинчен çырать. Нимĕçсем хăйсен аллинчи мĕнпур вăйсене хурса çапăçма шут тытнă пулмалла. Сицили, Сардини тата Тунис пек виçкĕтеслĕх пурри тĕнĕл держависен авиацине операцисем тума лайăх майсем кӳрет. Нимĕçсем çапла пĕлтереççĕ: Роммель генерал пулăшу илсе малтанах хатĕрлесе хунă позицисене йышăннă. Анчах та англичансем Роммелĕн çарне хĕсесси ӳссех пырать. 8-мĕш арми çапăçăва йывăр артиллерие кĕртнĕ. Роммелĕн çарне çавăрса илесси план тăрăх пурнăçа кĕрсе пырать.

ДАРЛАН ФРАНЦИН ÇУРÇĔР АФРИКИНЧЕ ЗАКОНСЕМ КĂЛАРАКАН СОВЕТ ТĂВАТЬ

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: адмирал Дарлан ноябрĕн 16-мĕшĕнче Петэн ячĕпе законсем кăларакан совет туса хунă. Агентство кăтартнă тăрăх, çав совет вăл «Дарлана вăл Францин Çурçĕр Африкин верховнăй комиссарĕ пулса тăнă май пулăшса тăмалла».

ÇУРÇĔР АФРИКĂНА ПЫРСА КĔРЕССИНЕ МЕНЛЕ ХАТĔРЛЕНЕ ПУЛНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ каланă тăрăх, Çурçĕр Африкăна пырса кĕрес ĕçе виçĕ отряда хушнă пулнă. Вĕсенчен пĕри пуринчен ытла Марокăпа Касабланкăна анса йышăнмалла пулнă. Çав отряд вăл Америкăн Африкăна каякан карапĕсенчен тăнă. Ытти икĕ отряд вара Алжирпа Орана тытса илмелле пулнă. Тинĕс çинчи мĕнпур операцисене адмирал Кенингхэм ертсе пынă.

Операцисем ăнăçлăн иртни чылай енчен вĕсене питĕ пĕлсе планланинчен тата каравансене график тăрăх питĕ йĕркеллĕн ăсатса тăнинчен килнĕ. Темиçе çĕр судно—линейнăй пароходсенчен пуçласа тральщиксене çитиччен—противникăн, подводнăй лодкисем вĕркĕшсе çӳрекен районсем урлă 3 пин мильăна яхăн кайнă. Алжира каякан суднăсен караванне вĕсем çыран хĕррине ыттисемпе пĕр вăхăтрах 0,1 сехет те 00 минутăра анмалла туса ăсатнă.

Каравансене Вăтаçĕр тинĕсре противникăн шыв çинчи вăйĕсенчен Англин шултăра çар карапĕсемпе авианосецĕсем хӳтĕлесе пынă. Америкăн шултăра çар карапĕсен операцисене суднăсен тепĕр эскадри пулăшса пынипе хӳтĕлесе пынă. Тĕнĕл держависен пысăк бомбардировщикĕсем Вăтаçĕр тинĕсре десант антармалли чаçсене пыра-пыра тапăннă. Америкăпа Англин сывлăшçар вăйĕсен тинĕс авиацийĕн самолечĕсем тата çар карапĕсемпе суту-илӳ суднисем çинчи зенитнăй орудисем çав тапăнусене сиенсĕрлетнĕ.

ФЛАНДЕНПА ПЮШЕ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин руководителĕсем илнĕ хыпарсем тăрăх, Çурçĕр Африкăна Фланденпа Пюше пынă. Фланден Петэн правительствинче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă, Пюше—шалти ĕçсен министрĕ пулнă.

КĔРЕШЕКЕН ФРАНЦИН ГЕНШТАБĔ ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ СОБЫТИСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин Лондонри генштабĕ çакăн пек официальнăй деклараци пичетлесе кăларнă: «Генерал де Голль тата французсен наци комитечĕ Çурçĕр Африкăра Виши представителĕсемпе тăвакан калаçусене вĕсем пĕртте хутшăнманни çинчен тата çав калаçусем пирки вĕсем хăйсем çине нимĕнле ответлăх та илменни çинчен пĕлтереççĕ. Çав калаçусенче Çурçĕр Африкăра Виши режимне çирĕплетсе хума килĕшес пулсан, вăл решенисене Кĕрешекен Франция, паллах ĕнтĕ, йышăнас çук. Францин тинĕс хыçĕнчи çарĕсене ирĕке кăларас ĕçре вĕсене пурне те пĕрлештерессине Франци халăхĕн ирĕкĕпе тата тивĕçлĕхĕпе килĕшсе тăракан условисенче туса ирттерес пулать».

Пирĕн земляксем

Юншăн—юн

Хĕвел хăпарнă май, ирхи тĕтре сирĕлме пуçларĕ. Сывлăш ăшăнчĕ, хĕвел ăшшăн пăхать.

— Пирĕн еннелле куçса каяççĕ,—сăмах тапратрĕ Лаптев, ыйхăллă куçĕсемпе тӳпене пăхса. Çĕркаçа блиндажра ларса ывăннăскер, халĕ вăл хĕвел ăшшине тухса, тăсăлса выртнă. Пӳрнипе çаврашка пĕлĕт чăмакки çине тĕллесе вăл çапла каларĕ:—Тен, сана пирĕн Сĕнтĕр урлă иртсе кайма тĕл килĕ, апла пулсан, манăн çак хĕвел пек ăшă, çак тĕнче пек пысăк салама килйышсемпе тăванăмсене леçсе парсам...

— Çĕклесе кайма пултарайрĕ-ши,—шӳтлесе кулчĕ унăн сăмахĕсенчен Файзулла Хабибуллин.—Ытла та пĕчĕк пĕлĕт татăкне хушатăн. Саламу вара—виçесĕр пысăк. Çук, йăтса çитереймĕ!

— Йăтса кайĕ-и, каймĕ-и, хамăн кăмăлпăн калатăп. Кам пĕлет, тен шăп та шай çак минутăра сан çинчен аса илеççĕ, сана ырлăхпа сывлăх сунаççĕ пулĕ. Э, Файзулла тусăм? Килйышсем кăна мар, пĕтĕм халăх шухăшлать пирĕн çинчен, пире пулăшассишĕн вăл кунĕн-çĕрĕн, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Çавăн пек пирĕн халăх!

— Тĕрĕс калатăн, Лаптев,—урăх сасă илтĕнчĕ блиндаж енчен. Вĕсем патне, траншея тăрăх пĕшкĕнсе утса, комиссар пынă.—Мĕн тума уçă çĕре тухса ларнă эсир?—ыйтнă комиссар, Лаптевпа Файзуллана алă парса.—Файзулла, санăн çемье пирки паян çыру илтĕм. Пурлат райисполкомĕн председателĕ çырать. Санăн арăмна сывалма санаторине ăсатнă, ачусем валли ăшă тумтирсем илнĕ, колхозран тырă уйăрса панă. Апусем халĕ ялти учительница патĕнче пурăнаççĕ, тесе пĕлтерет председатель. Акă, унăн çырăвĕ те хам çумрах-ха, вула.

Файзуллан куçĕсем йăлтăртатса выляннăçĕ, питçăмартийĕсем хĕрелчĕç, вăл самрăкланнă пек пулчĕ, чĕркуçленчĕ те, комиссар панă çырăва вуласа тухрĕ.

— Спасибă, комиссар юлташ!—Файзулла кăсйерен сăмса тутри кăларса, шывланнă куçĕсене шăлса илчĕ.

— Мĕн эсĕ, хавас мар-им ырă хыпара?

— Никита Герасимович,—тенĕ Файзулла,—ятран чĕннĕшĕн каçарăр мана, комиссар юлташ!—Хамăрăн халăх çинчен шухăшланипе кăмăл çемçелчĕ манăн...

— Файзулла, хамăрăн халăх, тăванăмăрсемпе тусăмăрсем пире нихăçан та манмĕç. Нумаях пулмасть эпĕ хаçатра пĕр красноармеец çемьи пирки вуларăм. Вăл пирĕн патăртисем, Çĕрпӳ районĕнчен. Хушамачĕ унăн Савельевчĕ пулас. Савельевăн кил-çуртчĕ вутра çунса кайнă пулнă. Колхозниксем унăн арăмне çĕнĕ пӳрт лартма пулăшнă, колхозран алă пăт тырă панă,—терĕ комиссар Казанков.—Пирĕн халăх пекки урăх ниçта та çук. Ылттăн халăх! Тăван çĕршыва фашистла бандитсенчен тасатсан, пурсăмăр та пĕрле ман пата Пăва ялне*) кайăпăр, пирĕн ял çыннисен хаклă хăнисем пулăпăр...

Сасартăк пăшалран икĕ хутчен пени илтĕннĕ. Çав самантра Файзулла сылтăм аллипе сулахай хулпуççине чăмăртаса тытнă, унăн пӳрнисем тăрăх юн тумламĕсем юхма пуçланă. Лаптев часах траншейăна сикнĕ, унтан вăл Файзуллана пилĕкĕнчен ыталаса тытса, хăй патне туртса илнĕ, вара ăна çавăтса блиндажа кĕнĕ.

Пуля Файзуллан аллине çурса витĕр тухнă. Комиссар унăн юнпа нӳрленнĕ кĕпе çаннине çĕçĕпе касса çурчĕ.

— Ыратмасть-и?—тепĕр хут ыйтрĕ Лаптев, юлташĕн ал шăммине чăмăртаса.

— Çук, ыратмасть, анчах ӳт пĕçерет.—Файзулла амантнă алли çинчен куçне илчĕ те, сăмах чĕнмесĕр, нумайччен пĕр хускалмасăр блиндаж амбразури витĕр тинкерсе пăхса тăчĕ.

Лаптев Файзуллан суранне ватăпа хупласа икĕ çĕртен туртса çыхрĕ.

— Файзулла, санчаçа кайăр,—хушрĕ комиссар Казанков юлташ.

— Халĕ эпĕ ниçта та каймастăп,—тавăрчĕ Файзулла комиссара хирĕç. Амбразура патнерех утса пычĕ, вара Лаптева хăй патне чĕнчĕ.—Авă, çав улăм купинсем хушшинчи йывăç тĕмескине куратни?

— Куратăп, анчах ĕнер çукчĕ-çке вăл унта!

— Çукчĕ çав, кĕçĕр «шăтса ӳснĕ» пулас.

— Снайпер вăл,— терĕ комиссар.

— Нумаях лараймĕ унта пӳтсĕр çĕлен-калта!

Лаптев икĕ шинел илчĕ, вĕсен ăшне улăм васкавлăн тултарса каска тăхăнтарчĕ.

— Комиссар юлташ,—ыйтрĕ вăл,—ирĕк парсамăр?

Комиссар Лаптевăн шухăшне ăнланчĕ. Юнашар окопра выртакан икĕ боеца чĕнсе илчĕ те, çав чучелсене пачĕ. Боецсем комиссар мĕн тума шутланине тăруках тавçăрса илеймерĕç пулас, вĕсем малтан пĕр-пĕрин çине, унтан комиссар çине пăхса илчĕç.

— Çак чучелсене брусвертан кăшт кăна кăтартса, траншея тăрăх каллĕ-маллĕ утса çӳрĕр. Астăвăр, пуçăрсене çĕкленĕ ан пултăр!—хытарса каларĕ вăл.—Лерен пенине илтсенех пĕр чучелне ӳкерĕр, теприне пытарам пекки тăвăр, вара каллех çĕклĕр...

Боецсем блиндажран тухрĕç. Лаптев винтовкăна амбразура янаххи çине хучĕ те чĕркуçленсе ларчĕ, йывăç тĕми çине тинкеререх пăхма пуçларĕ.

Вăхăт нумаях та иртмерĕ, йывăç хускалчĕ, унтан вара малалла шăвăннă пек пулчĕ. Файзуллапа комиссар, Лаптева кансĕрлес мар тесе, унăн хыçне кайса тăчĕç, лерелле тимлĕрех сăнаса пăхма тытăнчĕç.

— Фриц пирĕн çынсене курчĕ,—терĕ Лаптев.—Лайăхрах тĕллесе пеме вырнаçрĕ пулас.

Лаптев сăмахне вĕçленĕ-вĕçлеменех йывăç тĕмĕ патĕнче хура тĕтĕм йĕрĕ палăрчĕ, унтан пăшал сасси янăраса кайрĕ.

— Комиссар юлташ, пăхăр-ха, фашист хăйĕн «ĕçне» курасшăн, пуçне çĕклерĕ,—терĕ Лаптев.

— Мĕн сӳпĕлтетсе ларатăн, пер часрах!—çиллĕн сăмах хушрĕ Файзулла.

— Васкавлăх ӳте çыртакан пăрçана тытнă чух кирлĕ,—тавăрчĕ Лаптев. Лерен каллех пенĕ сасă илтĕнчĕ.—Куратăр-и, комиссар, фриц пуçне тепĕр хут çĕклерĕ. Лайăхрах, тинкерсерех пăхăр... Файзулла юнĕшĕн ил ман «кучченеçе», ирсĕр калта!..

Блиндажра тар тĕтĕмĕн шăрши сарăлчĕ. Лаптев затвора каллла туртса патрона кăларса пăрахрĕ те, винтовкăна тепĕр хут авăрларĕ. Фриц малтан ура çине тăрам пек пулчĕ, унтан аллисемпе хăлаçланса, тĕпрен касса татнă йăвăç пек, çĕр çине чикĕнсе ӳкрĕ.

— Молодец!—Комиссар Лаптева çурăмран çупăрларĕ.

— Спасибă Лаптев! — терĕ, хаваслăн Файзулла. Вăл тусĕ патнерех пырса, ăна ыталаса чуп турĕ.

— Виççĕр çиччĕмĕш,—терĕ Лаптев.

— Мĕн виççĕр çиччĕмĕш?—ыйтрĕ комиссар.

— Пирĕн взвод виççĕр çиччĕмĕш фашиста вĕлерни çинчен калатăп-çке. Эпир вĕсене уйăх каярах шутлама тытăннă,—ăнлантарчĕ Лаптев.—Асăрхасарах пăхăр-ха, комиссар юлташ: авă, улăм купи варринче хура паллăна куратăр-и? Тепĕр бандичĕ унта пытаннă имĕш!

Лаптев пулемета васкавлăн авăрларĕ те, виçĕ хутчен спусковой крючока пусрĕ. Часах улăм купине вут хыпса илчĕ. Унтан икĕ фашист сиксе тухрĕç, вĕсем вилĕмрен тарса çăлăнма пăхрĕç. Анчах Лаптев вĕсене çавапа утă çулнă пек, пулеметран пере-пере ӳкерчĕ.

— Кусем валли те икшер метр çĕр виçсе патăмăр,—терĕ вăл комиссар çине пăхса.—Ан тив, выртчăр унта, çĕрччĕр, текех вĕсем ура çине тăрас çук.

— Тав сана, Лаптев юлташ,—комиссар алă пачĕ.

— «Служу Советскому Союзу»,—ответлерĕ Лаптев, комиссар умĕнче тӳп-тӳррĕн тăрса.

— Сан пата часах смена килет, вара эсĕ тӳрех штаба пыр.

Комиссар Файзуллана аларан çавăтрĕ. Вĕсем траншея тăрăх вăрман витĕр тăсăлса выртакан сукмак патнелле пĕшкĕнсе утрĕç.

М. ЯКИМОВ.
ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ.

*) Пăва ялĕ—Кюмель-Ямашево, Вăрнар районĕ. Никита Герасимович Казанков çак ялта çуралса ӳснĕ. Вăл полк комиссарĕ пулса ĕçлетчĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1110 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Зак аз №2 Ф 6. 58 84 л.